Нестĕр
Йанкас

31-368
1222
№ 1222



# Ирхи йĕрсем

ЧĂВАШИСТАТ 1931

НЕСТӖР ЙАНКАС

# ИРХИ ИЙӖРСЕМ

## СӐВӐСЕМ

ҪӐВАШСЕН ПАТШАЛӐХ ИСТАТТӖЛСТВИ
Шупашкар — 1931

*Отв. редактор*
*Ив. Як. ЯКОВЛЕВ*

Отпечатано в типографии № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары

Заказ № 884 Чувашлит № 1362 Тираж 5100 экз.



## УМСӐМАХ ВЫРӐННЕ

Йанкас пирӗн çамрӑк, хӑвӑрт ӳссе пыракан поетсенђен пӗри, Ђӑваш Пролеттари Писсаттӗлӗсен Ассотсиатсин ђленӗ. Вӑл 1909-мӗш çулта Йанкас-Упире (Çӗрпӳ районӗ), вӑтам хресђен çемйинђе çуралнӑ. Хӑй 16 çула çитсен, 1925-мӗш çулта, Нестӗр (Йанкас) Шупашкарти типокрафине напоршђӗке вӗренме кӗрет. Сӑвӑ çырас ӗçе 1928-мӗш çулта пуçӑнат̆. Хӑйӗн сӑввисенђе вӑл пӗрре—хула, хапрӑк-савӑт йеннелле, тепре—уйхир, йал йеннелле туртӑнат̆. Рапођђисемпе ӗçхресђенӗсен çыхӑнӑвӗ тӗрекленсе пынӑшӑн савӑнса йурлат̆:

Хӑт̆ пайан еп саспалли
Хаçатра пухсан та,—
Сана, тулӑ пуђаххи,
Манмӑп нихӑçан та...

Типокрафинђе ӗçлесе, пиђет ӗçне çывӑх тӑнӑ май, Шупашкарти сӑвӑçсемпе паллашса,

вăл сăвă çырас ĕçе йуратса пăрахаť. Вырăс сăвăçисемпе—Торонĕнпа, Шарăвпа—интереслене, вĕсене йуратса вулаť, вĕсенђен вĕренет. Малтанхи Йанкас поеçиййĕнђе вĕсен витĕмĕ те (уйрăмăнах Торонĕнăн) хытă сисĕнет. Çавăнпа та унăн сăввисем çăмăллăн вуланаççĕ, уççăн йанăраççĕ, йакан йухса пыраççĕ, хушăран çăмăлттайлăн ђĕвĕлтетсе кайнисем те пур.

«**Ирхи йĕрсем**» Йанкас пултарулăхĕн малтанхи йĕрĕсене палăртакан сăвăсен пуххи. Ку сăвăсенђен нумайăшĕ пиђетре пулнă. Вĕсенђен хăшне-пĕрне кайран тата йусаса йакатнă.

Итеолоки тĕлĕшĕнђен сăвăсенђе пире сийенлĕ шухăшсем палăрмаççĕ, тем-лле. Анђах ђи малтан çырма пуçланă ик-виç сăввинђе вак-хуçалăхлă уйрăм хресђен туртăнăçĕ курăнкалаť:

Еп те тухрăм, ĕç пуçларăм
Çынсемпе танах.
Кăђăрт-кăђăрт... касăнтартăм,
Ĕçĕм ман, ăнах.

(«Хир йурри» сăвăран).

Çурлапа вырнийех, çапуççипе çапнийех поета савăнтараť, «манăн хирĕм», «манăн кĕлтем» кăмăллăрах та, çывăхрах та. «Уйăрлу çырăвĕнђе»:

Пурнсам, еппин, аттем,
Ес хӑв пекех...
...Еп сирӗнтен ирех
Йута тарниййӗ
Хаҫ маншӑн хаклӑ
Ҫӗнӗ пурнӑҫра...—

тенӗ йӑнӑш вырӑн пур. Ватӑ ҫын кивӗ пурнӑҫри йӑласенҫен уйӑрлаймасӑр, ҫӗнӗ пурнӑҫ каҫҫине тарӑхтарат пулсан, каҫҫин ӑна алӑ сулма кирлӗ мар, кун пек туни тӗрӗс те мар; пирӗн кивӗлӗхрен уйӑрлайманнисене ҫӗнӗ йӑлапа, ҫӗнӗ ӗҫпе ҫӗнӗ пурнӑҫ ҫулӗ ҫине ҫавӑтса кӑларма тӑрӑшмалла.

Хӑш-пӗр сӑввисене Йанкас колхос йухӑмӗпе ҫыхӑнтарат. Колхос ӑшҫиккинех кӗрсе унти ӗҫ мeслеҫӗсене питех тӗплӗн кӑтартаймаст пулин те, сӑввисемпе вӑл колхос йеннелле пӗр утӑм йарса пусат, ҫамрӑксене колхоса кӗрсе кивӗ йӑласене ҫӗнетмешкӗн ҫанӑсене тавӑрса ӗҫлеме ҫӗнет. Пуҫа усса ларас йӑла, нӑйкӑшу йенне туртакан кӗвӗсем кунта ҫук.

Йанкасӑн унҫухнехи ҫитменлӗхӗ вӑл—сӑвӑ ӑсталӑхне кирлӗ таран ҫавӑрса илейменни пулса тӑрат.

Пӗтӗмӗшпе илсессӗн, спорнӗкре сӑнлӑхсем йенҫен самай илемлӗ, ҫӗнӗ вырӑнсем пур. Пуринҫен ытла поет йалти карттинлӑха, ҫутҫанталӑка илемлӗ кӳлепе ӑшне кӗртме пӗлет. Сӑмахран: «Йантрамарӗ купӑс уҫҫӑн» сӑвӑ хитре, йака вуланат, сӑнлӑхсем вырнаҫуллӑ.

Ку шута «Виççĕмĕш çул маршĕ», «Майак-ковскипе курнăçни», «Хапрăкрах», «Атăл çин-ҫе», «Улăх кĕвви», «Çĕнĕ мăшăр» т. ыт. сă-вăсем те кĕреççĕ. Ку сăвăсенҫе, ҫăнахах та, поет çамрăксене çĕнĕ йăлашăн, çĕнĕ пурнăç-шăн, колхосшăн кĕрешме йăхăрать.

Йанкас илемлĕ çырулăх çулĕ çине тăни виçĕ çул çитет, çак кĕске вăхăтрах вăл лит-тераттурă ĕçĕнҫе палăрма ĕлкĕрҫĕ. Малта асăннă çитменлĕхсене хăйех сиссе пĕтерсе пырать.

«Ирхи йĕрсем» такăрланассине, пысăк çу-лах илсе тухассине шанас килет, массăна çы-вăх, хаљхи строиттĕлствăн калама çук тĕреклĕ утăмĕсене сăнлăхласа, ĕçре патварлăх кӳрекен сăвăсем йенне куçмалла. «Ирхи йĕрсем» çав йеннеллех йĕрленеççĕ.

**Н. Ваçанкка.**

Колхоссен хирӗсене ҫӗнӗлле йешертес
ӗҫре ӗҫлекен йулташа—
РОНӐ ИВАНОВА акронома

## Хапрӑк йурри

Темшӗн, темшӗн ман ҫӗре
Хапрӑкрах вӗресшӗн,
Ҫак кунсемшӗн ҫыс ӗҫре
Хаваспах ӗҫлесшӗн...

Ҫамрӑк халшӑн иртнӗ ҫул
Хӗрӳ ӗҫ хиртеҫҫӗ.
«Тырӑ выр та, утӑ ҫул!»—
Йуррӑмҫӑм вӗҫеҫҫӗ.

Пайан ак еп хапрӑкра
Станокпа йулташлӑ.
Ҫавӑнпа ман сӑвӑра
Хурҫӑ йышӗ ташлӗ.

Ҫыслӑ ӗҫшӗн ӗҫ алли
Ман ӗҫпе хаваслӑ.
Ак пухап еп саспалли,
Умра хурӑн кассӑ...

Вут-вӑйпа кӗрлет моттор,
Пиҫетлет машшинӑ...
Ку ӗҫсемшӗн еп маттур,—
Кӳр, верстаткӑ, шилӑ!*

* Кассӑ, верстаткӑ, шилӑ—типокрафинҫе ӗҫлекен напоршҫӗкӑн ӗҫхатӗрӗсем.

Хăт пайан еп саспалли
Хаçатра пухсан та,—
Сана, тулă пуђаххи,
Манмăп нихăçан та...

Пурçăнпаи кипкине
Тусăм тĕрĕлеђђи,—
Епĕ те хаљ хут çине
Тĕрĕ тĕрĕлетĕп.

Ман ку тĕрĕ хаксăр мар—
Çутă Шуçăм тĕрĕ.
Çав тĕрпехĕçке патмар
Тăван—«утăп!» терĕ.

Хĕпĕртеп еп, вăхăтра
Ик ĕçпе паллашрăм:
Пайан акă хапрăкра
Хурçăпа туслашрăм.

Хурçă шав хăт хăлхара
Хăт уйхир кашлавĕ,—
Маншăн пĕрпекех хакра
Хурçă ĕçĕн шавĕ.

Вут-вăйпа кĕрлех, моттор,
Пиђетле, машшинă!
Ђыслă ĕçшĕн еп маттур—
Кўр, верстаткă, шилă!

Акă мĕншĕн ман ђĕре
Хапрăкрах вĕресшĕн,
Çак кунсемшĕн ђыс ĕçре
Хаваспах ĕçлесшĕн!

28 ç.

## Ҫула тӑрӑх

Пире хирӗҫ йупасем
Ӑмӑртсах ҫупаҫҫӗ.
Уйхир тумшӗн куҫӑмсем
Ман каҫсах кайаҫҫӗ.

Ех, илемлӗҫке уйхир
Ҫимӗҫпе ларсассӑн.
Йасмӑк,
Клевӗр,
Сӗлӗ,
Вир
Ав иртеҫҫӗ кассӑн...

Вут-пӑс туртнӑ хурҫӑ лав
Малаллах васкасшӑн.
Хресҫенсем те курӑр, ав
Ҫӗнӗ хир тӑвасҫҫӗ.

Сакӑр пусӑллӑ уйхир...
Паллӑ, йал ҫӗнелнӗ.
Ҫӗнӗ пурнӑҫ тилхепи
Кунта, ҫӑн, ҫӗнленнӗ.

Хурҫӑ лав пек вут-вӑйсем
Хаљ уйхир те кӳрнӗ.
Ав лерех колхоҫнӗксем
Хурҫӑ трактӑр кӳлнӗ...

Кантăк тĕлпе йупасем
Вĕлт те вĕлт! иртеççĕ.
Пуçăмра ман шухăшсем—
Йал,
Хула тивлеҫĕ.

Хапрăк-савăт truписем
Хаҫ таçта та хĕмлĕ.
Вăй-халтан ĕçлекенсем
Çĕнĕ ĕçшĕн тимлĕ.

Еп вĕт хам та ĕçлекен,
Ĕçпелех вĕретĕп.
Пиҫет ĕçшĕн кунсерен
Хута тĕрĕлетĕп...

Хурçă савăт,
Çеçен хир,
Сирте çук асаплăх.
Пиҫетле
Хăт тырă выр—
Маншăн ĕç сăваплă.

Ех, илемлĕ хир ҫĕрçи
Çимĕçпе ÿссессĕн—
Йасмăк,
Виккă,
Вир,
Пăрçи
Куç умне ÿксессĕн.

Йешĕл улăх,
Уйхир,

Йал,
Маншăн есĕр—
Ылттăн.
Хулапа йал, алран ал
Пĕр çул тытăр хыттăн.

Урăх йухмĕ хир сăрт-варĕн
Йунлă-тар куççулĕ.
Кĕç хирех килсе çывхарĕ
Хурçăланнă кӳлĕм.

28 ç.

## Йантрамарĕ купăс уççăн...

Ех, йантра, йантра, тăмра,
Тинкĕл-тенкĕл!.. уççăн.
Ташша йатăр ман умра
Комун хĕрĕ Туççă...

. . . . . . . . . . . . .

Пирĕн Туççă пит çунаѢѢĕ
Купăсçă Çтапуçшăн.
АнѢах кĕç кĕтейнĕ шанѢăк
Тĕвĕленѣĕ Туççăн.

Сӳнѣĕ купăсçă Çтапусăн
Çамрăклах кун-çулĕ.
Пит те йухрĕ уншăн Туççăн
Йурату куççулĕ.

Йантрамарĕ кулăс уççăн
Касра Çтапуç хыççăн.
Кашни каç хурланѣĕ Туççă
Купăсçă Çтапуçшăн:

«Кĕçĕрхи пек астăватăп:
Çурхи каç... санпаѣѣĕ...
«Сана, Туççă, йурататăп...» —
Йурату çунаѣѣĕ...

Ех, ма вăхăтсăр, Çтапуçăм,
Куççене ир хупрăн...
Çĕнĕ пурнăçшăн ес, тусăм,
Йунлă-ўслĕк тупрăн.

Астăвап: ĕçе тытаттăн
Ес ним хăрамасăр.
Комуна мана ыйтаттăн,
Еп тăтăм пымасăр.

Хăшђух санăн вăхăт пуши,
Ĕçрен тавăрнаттăни—
Йаланах манпа, Çтапуçăм,
Курса халаплаттăн.

Комунран халап пуçлатни,
Турра хирĕçлеттĕни...
Ленина тек асăнаттăн,
Ăса вĕрентеттĕн...

«Тĕнђене усраў-тĕр турă,
Турă пархатарлă...
Ђăннипехçке пулнă сурăх—
Сўйа тĕнлĕ халăх.

Турăна етемлĕх «тупнă»,
Турă çук, пулман та.
Тĕттĕм халăх тĕнпех супнă,
Ултава туйман та.

Ђирĕкпе мар, халђ шкул урлă
Пурнăç çулĕ такăр.
Унђух тин кăна куљттурлă
Пулĕ кас, пăха-тăр!..»

Канлĕ çывăр, Çтапуç тусăм,
Асрах маншăн есĕ.
Санран йулђĕ мана усă—
Комсомол тивлеђĕ.

Шĕкĕр килĕм хаљ комунă
Манăн—комсомолккăн.
Манпалах унта хаљ вуннăн,
Вунă комсомолккă.

А комунăн ĕç темђухлĕ,
Ун уйхирĕ анлă...
Унта епĕр вăтам-ђухăн
Çĕррĕн тăванланнă.

Ушкăнпа ăнаť ĕç вирлĕн,
Вут-вăйсем те кўрнĕ.
Сакăр пусăллă уйхирĕн
Темђул усă пур мĕн!

Канлĕ çывăр, Çтапуç тусăм,
Асрах маншăн есĕ.
Санран йулђĕ мана усă—
Комсомол тивлеђĕ...»

Йантрамарĕ купăс уççăн
Касра Çтапуç хыççăн...
Çапах ђĕрĕ пил Çтапуçăн—
Комунра хаљ Туççă!

Ех, йантрах, йантра, тăмра,
Тинкĕл-тенкĕл!.. уççăн.
Шыв йуххи пек ман умра
Ташши йухтăр Туççăн...

28 ç.

## Ҫӗнӗ мӑшӑр

СЫПӐК

1.

Тинӗс йевӗр
Тӳлек тӳпере
Катӑк уйӑх шӑваҭ
Тӑлӑх хуррӑн.
Вӑйӑран
Кас йаш-хӗрӗ кӗрет.
Униђе пушанаҭ.
Сӳнет йурӑ.

Хаљ кӑна униђе пушансассӑн
Пӗр сата
Ҫатан урлӑ каҫса:
«Таҭйан, еси?» тесе
Пађӗ сасӑ
Пӗр шенеллӗ маттур
Хашкаса.

Кӗҫех
Шӗшкӗ ҫатан ҫумӗнђен
Сата
Икӗ мӗлке хӑвӑрт шурӗ.
(Вырӑн хӳтӗ
Мӑн сат хӳмӗнђе...

Вěсене
Уйăх çеç вăрттăн курě).

Лăпсăркка улмуççийě—
Лупас,
Айěнђе унăн
Икě мěлке.
Кăшт кăна ђӳхенет
Пысăк сас:
«Улталари сача
Йемелкке?

Ђěрӳпех,
«Инке» тусăм, кала—
Мěншěн ес
Çав-тери улталаннă?
Выљамасп еп санпа
Ађалла,
Ахаљ мар
Ман йанах сухалланнă...»

Укăлђа хыçěнђе кěвěлет
Йухан шывлă çырма
Шăнкăр çемě...
«Тереней,
Итлесем, ђунăм...» тет
Инкеленнě Taтйан
Йěрнě-çемěн.

«Ах, ан вăрç ес мана,
Теренейěм,
Сан умра
Еп пěр айăпсăр çын.

Ех, ăçташи,
Ăçта
Ман телейĕм?
Теттĕм еп ĕсĕкпех
Иртнĕ кун...

Ав çырма,
Тарăн шывлă пĕве,
Хăвасем,
Йăмрасем ун тавра...
Туй каçне
Еп ђутах хам пӳве
Уртăнлаттăм шыва
Йăмраран...»

Аллипе Тереней
Питне витрĕ,
Хыт итлерĕ
Таӯйан халапне.
Тӳпен çăмсăр хирне
Уйăх виçрĕ
Йăпшăнайрĕ
Кăтра сат хыçне.

Йăлтах пĕлђĕ йашçын,
Йăлт тăнларĕ
Хăй тусне
Йытă пек сутнине.
Шатăртах ђышкине
ђăмăртгарĕ
Тереней
Ылханса иртнине.

Пĕђĕкрен
Тереней килĕштернĕ
Хăмăр куçлă
Ђипер Таťйана.
Анђах урăх кађђă
килĕштернĕ
Тереней салтакра ђух
Ăна.

Таťйана
Вăйпалах кађђа илнĕ
Çĕр тенке Йемелкке—
Мăн пуйан.
Çапах леш
Хăй туснех асаилнĕ—
Теренейшĕн
Вăл çуннă йалан.

Хăшђухне
Тупăсем çывхăнђех
Теренейшĕн те
Ўснĕ Таťйанĕ...
Тăшмана
Тĕппипе çĕнсен çеç
Таťйанпа
Ал тытма вăл ăмсаннă.

Йун-тăхлан пĕрхĕтен
Çăмăрсем
Çĕнĕ хир тўпинђен
Иртсе кайнă.
Тереней

Муллăха çĕмĕрсен
Тин касне
«Ĕмĕтпе» тавăрнайнă.

2.

Çурхи ир тăп-тăрах.
Сывлăш уçă.
Сулхăнпа
Кĕлеткем çӳçенет.
Сат кăтри хыçĕнҫех
Шурăмпуçĕ
Кăвакçут ҫĕрçинҫе
Ҫӳхенет.

Шарт-шарт-шарт!
Çунатне автан çупрĕ
Çур ирне
Хапăлпах йышăнса.
Лăпсăркка сат çине
Килсе ҫупрĕ
Кушак пек
Çил вăш-вăш! пăлханса.

Йăр та йарр!
Тӳпене ҫĕркелерĕç
Сӳнекен
Йалтăркка пăнҫăсем.
Таврара
Ăмăртсах вĕркелерĕç
Такампа туллашса
Йытăсем.

Çур тӳпи аркине
Ак хупларĕ
Кăвакçут
Çилхипе çавăрса...
Татйана та
Йашçын ыталарĕ:
«Хам патма айта!» терĕ
Тăрса.

«Килĕшетĕп санпа,
тусăм!»
Терĕ
Татйан акă
Хастар сасăпа...

. . . . . . . . . . . . . .

Кĕçĕн-çын тарнине
Ним сисмерĕ
Упăшкийĕ
Саттур ыйхăпа.

Икĕ çын урампа акă
Утрĕç,
Икĕ çын—
Тереней Татйанпа...
Кăвакçут çилхине
Йăлтах уртрĕ
Кас çине
Хĕм-кăвар çутăпа.

Кăтра тумлă
Мăн сат саламларĕ
Кайăксен кĕввипе

Çур ирне.
Йрхи сулхăн
Шăрçа йарăмларĕ
Çеçен касăн
Çинçе урамне.

Кăнтăрла пуйана
Пăталарĕç
«Таҫйанпа Тереней...»
Тенисем.
Уйăрлми мăшăра
Вараларĕç
«Суҫкасем» те тесе
Хăшĕсем.

Вăтанмарĕ паҫах
Ман Таҫйанăм
Савнă тусĕ патне
Пынăран...
Çĕнĕ пурнăç
Пире халаланă
Йуратуллă пулма
Мăшăра!

28 ç.

## Улăх кĕвви

Йешĕл улăх
Тем сарлакĕш!
Ҫалтăрарĕç кусăмсем:
Кĕмĕл шыв...
Хăва...
Хур-акĕш...
Сарă,
Хĕрлĕ ҫеҫексем...

Ой, илемлĕ йешĕл улăх,
Илемпе çиçет ҫĕрем.
Ҫавал шывĕ тăрă,
Тулăх,
Ҫыранне витет
Ҫерем.

Хăлтти-кăлтти...
Шыв арманĕ
Сахал мар çав
Ҫавалра,
Ак Ҫĕнкас колхос арманĕ
Хăлтлатать,
Ĕçлет умра.

Каш та каш...
Кашлать çĕр саслăн

Шурă кăпăклă вершник.
Ђантлатаť кĕлет хавaслăн—
Ђул тăхаť унта мелник.

Кунпах пĕтмĕ
Ҫавал ĕҫĕ,
Хĕрў ĕҫ ыйтаť
Хăват...
Ҫулсем хăвăрт иртĕҫ,
Вĕҫĕҫ—
Хисепленĕ ҫав хăват.

Кашни ҫирĕп пуснă утăм
Пусăмланмĕ кайалла.
Пĕрлешсе ĕҫре
Пĕр шутлăн
Хађ васкарха
Малаллах!

* *
*

Ой, илемлĕ йешĕл улăх,
Илемпе ҫиҫет ђĕрем.
Ҫавал шывĕ тăрă,
Тулăх.
Ҫыранне витет
Ҫерем.

Нимĕнле киђем салхуллăх
Кунта татмĕ
Кăмăла.
Ҫыранрах ак
Хăмăр тулă
Сĕткенленĕ хăмăла...

Çыранрах
Кĕрен хăваллăх
Кăтрине шывра ђӳкет...
Ой, аннемçĕм—
Мăн Çавалăм,
Ђăпăлла мана ес тек!

Кĕпене хывса çакатăн
Йаштак хулă хăваран,
Пулă пек
Шыва ђăматăн
Тарăн
Сивĕ авăра...

Ђӳхенсе
Шывран тухатăн—
Вырăнта сан
Кĕпу çук...
«Куçăнах манран кулатăн,
Манпала
Ђӳкенес ђух?!.»

Ес «ăна»
Ђасах тупаймăн...
«Хи-хи-хи!..»
КулаТ хăва.
Хăвана вăрçса кăклаймăн,
Тепĕр хут сикен шыва...
. . . . . . . . . . . .

«Есĕимха,
Савнă тусăм,
Пытарса ман кĕпене?

Алхаснин сахал çав усă,
Хăмăр куçăм,
Ку ҫухне...»

Савнă тусăн
Хăмăр куçĕ
Йăл-йăлл... пăхрĕ
Ман çине:
«Унранах, тен,
Пысăк усă?»
Тесе,
Йĕрҫĕ тутине.

Пĕр манерлĕ шухăш ҫупрĕ
Манăн
Улăх хĕрĕпе.

. . . . . . . . . . . . .

Çыранри хăва ал çупрĕ—
Шĕпĕр-шепĕр...
Йерипе...

Пит хаваслăн
Манпа çумлăн
Ихиклерĕ тус кулли...
Нӳрĕ улăх—
Симĕс тумлă,
Кĕмĕшке—
Ҫеҫек кӳлли.

* *
*

Ой, ҫĕрем,
Ес ма вĕретĕн,
Кăкăра çĕклен,

Тапан?
Йе çитес куна кĕтетĕн?
Йе хăв тусупа супан?

Ҫĕрем сиктĕр,
Йун вĕретĕр,
Мĕншĕн хаљ ăна ҫарар.
Çак тĕнҫешĕн ӳснĕ
Епĕр,
Уншăнах
Вăйа хурар!

Ҫĕрем савнă тусăм,
Халĕ
Пĕр çулпех утар
Мала.
Ку ҫухне
Хăй кам та калĕ—
Ҫăн,
Çĕнелҫĕ самана!

Кашни çирĕп
Пуснă утăм
Пусăмланмĕ кайалла.
Пĕрлешсе ĕçре
Пĕр шутлăн
Хаљ васкарха
Малаллах.

28 ç.

## Улăхра

ЙУРĂ

Йем-йешĕр,
Ҫеҫеклен,
Аслă улăх,
Илем кӳр ҫĕр питне
Тумупа.
Иртнĕ каҫ ҫеҫ мана
Тулли уйăх
Ҫуптутарҫĕ санра тусăмпа.

Хуларан вăл
Йала курма килҫĕ,
Хуларан—
Машшинсем ҫумĕнҫен.
Каҫхине
Улăха ҫĕнсе илҫĕ,
Аҫашларĕ
Кăлкан ҫӳҫсенҫен...

Тӳпе тăрă вăл каҫ,
Сывлăш уҫă.
«Йуратататăп сана...»
Терĕ Уҫăп...
Халаппа, ах!
Вăл уҫрĕ ҫуна,
Кĕме хушрĕ мана

Комуна...
«Килеп,—терĕ,—йала
Çăв тума».

«Санпалах, тен,
Кунта утă çулăп
Ирсерен
Сывлăмпа ђўкенсе.
Санпалах та
Кунта вырăп тулă...»
Терĕ вăл
Сиктерсе ђĕрçинђе...

Ирĕк пађĕ вăл каç
Тулли уйăх
Уçăппа ăнтăхмашкăн
Мана...
Ак кĕçех вăл килет...
Аслă улăх,
Хумхатсам тинĕс май
Хăв тумна!
Кĕçех килĕ вăл утă çулма...

Кĕмĕшке çарансем,
Тулă,
Сĕлĕ,
Ђасрах кĕрĕр,
Ђасрах сĕткене.
Шăрăхпа йăвăрлан,
Пĕлĕт! пĕлĕт!
Çăмăрлан та пĕрхĕн
Çĕр çине...

Ел кĕтетĕп ăна,
Килтĕрехҫĕ
Çăв ҫума вăл йала
Ернерен...
Мана мĕн,
Карҫăксем хăй пелкеҫҫĕр
Савăт йашĕ çумне
Йернĕрен.

Савăт йашĕ
Хаљ çĕнĕ йăлашăн,
Пайан йут ăна
Кивĕ йăла.
Хаљ мана та
Аннемçĕм укçашăн
Йута сутмĕ каҫҫа
Йытăлла.

Ҫеҫексенĕн кĕскеи вăл
Ĕмĕр,
Йешереççи вĕсем пĕр çура—
Çавнашкал
Çамрăксенĕн те ĕмĕр,
Савăнар хаљ çампа
Йашлăхра.

Йашă ҫух ăнтăхни
Çамрăксемшĕн
Култăр вăл асăнма
Ватлăхра...

Пĕтпĕлтет йанкăсрах,
Путенемçĕм,

Хӗлшӗн йултӑр йурру
Улӑхра...

Йешерех,
Сӗткенлен,
Аслӑ улӑх,
Вут хӗвел урисен айӗнҫе...
Ак кӗҫ тайӗ пуҫне
Сарӑ тулӑ
Манӑн савнӑ йулташ умӗнҫе.

28 ç.

## Уйӑрлу ҫырӑвӗ

Ђипер пурнатриха,
Питђем,
Аттемҫём,
Сёнеп сире хула пек
Мӑн салам.
Ђёрем сиксех хӯхлет,
Вӑрҫаŭ ман темшён
Сире асаилсе
Кунта йалан.

Тахҫан
Сӑмах йухсађђё майсӑр
вирлӗ
Ман сирёнпе:
«Йала ҫёнетмелле.
Виҫ уй ҫинех
Вун уй ђёрмешкён кирлӗ.
Йалпах ертел туса
Пёрлешмелле...»

Анђах хастар ђёлхем
Пустуй йӑсларӗ.
Сире хӑна ҫеҫ пулђё
Ман халап.
Авал ђанне
Манах ҫапма пулмарӗ.

«Сывпулăрсам!» —
Сулайрăм еп алла.

«Кам мур-ђирне ес хыврăн,
Йытçиййĕсшĕ!»
Тесе
Манпа тек ан туллаш,
Аттем.
Кăвак сухал ухлаť сан
Кив тĕнђешĕн,
Кукша пуçу:
«Çăлсамђђĕ, — тет, —
Çӳлти атте?..»

Çампа санпа текех
Сăмах ман урăх.
Пурнсам, еппин, аттем,
Ес хăв пекех.
Анђах мана
Ултавлă сирăн «турă»
Кĕлле тăратмĕ
Хăй умне текех.

Еп сирĕнтен ирех
Йута тарниййĕ
Халђ маншăн хаклă
Çĕнĕ пурнăçра.
Хулан патмар
Çĕн пурнăç тилхепиййĕ
Алрах,
Алрах халђ манăн
Савăтра.

Кунта пире хулан
Ҫĕн савăт ҫурҫĕ
Пин ҫын туптаť
Хĕрӳ ĕҫре пĕрле.
Кунта хула
Мана хастарлăх кӳрҫĕ.
Кунта хула
Тимĕр шавпе кĕрлет.

Алра хаљ ман выљаť
Тăхлан пĕрҫи.
Пухап шурнал ваљљи еп
Саспалли.
Аттем,
Пиҫҫем,
Еп хаљ хула каҫҫи.
Ырмасť ҫĕн савăтра
Ман ĕҫ алли.

Сывпулăрха, еппин,
Пиҫҫем,
Аттемҫĕм,
Сĕнеп сире хула пек
Мăн салам.
Ман хаљ
Ҫĕн савăтри
Хĕрӳ ĕҫсемшĕн
Ҫĕрем сикет,
Вĕрет вут-йунпалах.

28 ç.

* *
*

Тулли кĕмĕл уйăх
    Таçтанах çăваť
Сĕмлĕхпе хупланнă
    Лăпкă çĕршыва.

Çавал шывĕ—тĕкĕр—
    Ёмет тӳпене.
Çыран тăрăх вĕтлĕх
    Ђӳкет кăтрине.

Акă унăн йешĕл
    Кипки ăшĕнђе
Сасăсем çĕкленђĕç
    Кăваť кутĕнђе.

Тăлăпа çӳреççĕ
    Унтах лашасем.
Тинкĕл-тинн... йухаççĕ
    Шăнкрав сассисем.

Кĕçех йурă тăсрĕ
    Пĕри ушкăнтан.
Вĕтлĕх ахăлтатрĕ
    Таврара—йан-йанн...

Акă ахăр сасă
    Вĕтлĕхрен тухса

Ҫавал шывӗ тӑрӑх
    Вӗҫрӗ улӑха.

Ҫӗрхи улӑх лӑпкӑ,
    Сывлӑшпа—таса.
Вӑл хирех ӑсатрӗ
    Вӗтлӗхри сасса...

Тулли кӗмӗл уйӑх
    Паҫӑрах ҫӑват
Сӗмлӗхпе хупланнӑ
    Лӑпкӑ ҫӗршыва...—

Ҫаплах улӑх, хирӗ
    Саспа ҫӳхенет.
Хӗлхемлӗ кӑваҫӗ
    Ҫунат те сӳнет...

28 ҫ.

**Хир йурри**

Кăпăш йур хиртен тасалҫӗ
Ирĕлсе-йухса.
Нӳрĕк çĕр кĕçех хуралҫӗ
Çур-тырри акса.

Ҫăвăш-ҫăвăш... акнă тырă
Шăтĕ кĕç йĕпле.
Çăмăр çăвĕ, ӳсĕ ырă,
Пулĕ ак йепле!

..Шăпăр-шăпăр... çăмăр йухрĕ
Кассăн тӳперен.
Акнă тырă шăтса тухрĕ
Тепĕр ернерен.

Кунĕн-çĕрĕн хир йешерҫӗ.
Виҫкĕн çитĕнет.
Уйхир ҫирĕ мана йерҫӗ—
Ҫĕрçинех ҫĕнет.

Йешĕл хирĕм, вĕт вăрманăм.
Ытармасп сире!
Йалăм-йышăм, йуррăм манăн
Ыталаҭ сирех.

...Ирсерен хире тухатăп
Мăн хурăн çулпа.

Савӑк кӑмӑлпах утатӑп
Йем-йешӗл уйпа.

Шухӑшсем ман: «Ӳс, пиҫ,
тыррӑм,
Ан пулах найан.
Кӗҫ сана еп тухса вырӑп,
Кӗлтерен—капан»...

...Ӳссе пиҫрӗ акнӑ тырӑ,
Ылттӑнлаҫ хире.
Тухрӗ халӑх вырӑн-вырӑн
Вырмана ирех.

Еп те тухрӑм, ӗҫ пуҫларӑм
Ҫынсемпе танах.
Кӑҫӑрт-кӑҫӑрт... касӑнтартӑм
Ӗҫӗм ман, ӑнах.

Савӑк сасӑ тек йантрарӗ
Уйхире савса.
Ҫамрӑк халӑм ыв ӑнмарӗ
Тырпула вырса.

Хир пушанҫӗ... Хӑвӑртларӗ
Хӗрӳ ӗҫ килтех.
Тепӗр вӑхӑт тӑпӑртатрӗ
Итемре кӗлте.

Ылттӑн хирӗм тӗшӗлленҫӗ,
Кӗҫӗ вӑл алла.
Ӗҫ йурри те ман вӗҫленҫӗ.
Ҫӑв кунне салам!

28 ҫ.

* *
*

Уттăн-уттăн кайăксем
Мал йенне васкаççĕ.
Йавăççен те шулçисем
Куллен çаралаççĕ.

Хир те тулăх кăкăрне
Çимĕçрен хăтарђĕ—
Ылттăн тырă вырăнне
Хăмăл çеç хăварђĕ.

Хиртен кĕнĕ кĕлтесем
Итемре ташларĕç,
Ахăр шавлă машшинсем
Кунсĕрен йăсларĕç.

Сарăлса пăхмасť хĕвел,
Сивĕтет çанталăк.
Кĕрĕ шартлама хĕле
Кĕç уçас пек алăк...

Сивĕ çилĕ тек улаť,
Тутăхаť çăв тумĕ.
Çăмăрĕ куллен çăваť,
Çăрăлаť кил умĕ.

Сивĕ çилĕ уласа
Çăв тумне тулларĕ.

Сивĕ çăмăр йур пулса
Çĕршыва хупларĕ.

Умра акă—сивĕ хĕл,
Çĕршыв—çемçе мамăк.
Йĕлме йĕлтĕр—вĕлтĕр-вĕл...
Хатĕр хĕлшĕн манăн.

Кашни çамрăк сывлăха
Хĕлле пăхма пĕлтĕр.
Кăкăр уçă сывлăша
Çăттăр, шăвăн йĕлтĕр!

28 ç.

## Шăллăм пионер çырăвĕ

Уйхирĕн кăкăрне
Кĕрт-йурпала
Шăлса ҫупан
Хĕл çилĕн алли виттĕр
Сана, пиҫҫем,
Пионерла салам—
Йалти
Хăв шăлнунтан—
Вĕçейсе çитĕр.

Йепле пурнатăнха,
Пиҫҫемçĕм Нестĕр,
Темҫул илемлĕх пулĕ халĕ
Тĕп хулан...
Епир кунта—Мишша,
Настаç... çўретпĕр
Куллен хут вĕренме
Йалти шкула.

Шкулта
Уҫҫитлĕ пирĕн пит аван,
Пире
Йалан таса тытса усрасшăн.
Епир шкултах ĕрҫетнĕ
Ҫăх-автан,

А ман ҫӑхсем
Халех маҭак тӑвасшӑн.

Шкултан килсе
Уроксемпе ларсан
Йӗлтӗрсемпе
Тек йарӑнма вӗҫетпӗр...
Пӗр сӑмахпа сана калас
пулсан—
Епир йалта, пиҫҫем,
Аван ӳсетпӗр.

Пӗркун аннесене
Траххом ҫинҫен
Пӗре
Йӗркеллӗн ӑнлантартӑм та—
Халҫ хам
Пӗр питшӑлли тытап пӗҫҫен,
Аннесенпе
Шӑлмасп нихҫан та...

Ну, йурӗ.
Мӗскерех ҫырас тек ман...
Отрет аван ӗҫлет...
Тек ҫук нимех те.
Сывах йулап, пиҫҫем,
Ку ҫыруран,
Ҫыру ҫасрах ҫырса йарах,
Кӗтетӗп.

28 ҫ.

## Атăл çинҫе

Кĕмĕл сăнлă Атăл
Çутăлаť умра.
Ҫыспа ăна хапăл
Епĕ йуррăмра.

Ахаљ мар-тăр епĕр,
Епĕр—сăвăçсем—
Унщăн кĕвĕлетпĕр
Йанкăс сăвăсем...

Ак «хурçă аккулă»
Атăла туллаť.
Ун хыçăнҫен сулă
Хумсене çуллаť.

Сулăран хавaслă
Йурă çĕкленет:
«Ой, ишшо та рас!»
Йăлăм ахăр саслăн
Унпа сĕмленет:
«Ой, ишшо та рас!..»

Ай та ей! ĕçлетпĕр,
Ўстĕр пысăк çурт...
Ой, ишшо та рас!
Пĕлĕтех çĕклентĕр

Хĕрĕх хутлă пӳрт..
Ой, ишшо та рас!..»

. . . . . . . . . . . . . .

Пуплесемҫҫĕ, Атăл,
Манпа хумупа...
Ҫулупа ес — ватă,
Ҫĕнĕ - -тумупа.

Асаилтĕм кĕвĕ
Сан ҫинҫен пайан:
Санăн ҫапу ĕлĕк
Пулнă мĕн пуйан...

Есĕ ирĕк панă
Раҫĕн Ҫтапанне
Хывваймашкăн панăн*
Пурҫăн сăкманне.

Панăн пĕр сăкманĕ
«Ахаљ» мĕн пулман:
Уншăн халăх панă
Ăна ҫĕр сăкман...

Темҫул асап тӳснĕ
Халăх унҫухне.
Панăн ĕнси ӳснĕ
Йут ĕнсе ҫинҫех.

Ҫавăнпа, тен, Атăл,
Есĕ ҫăтайман:

* Пан—улпут.

Ҫӗнсе илнӗ хапăл
Тонран утаман.

Ҫуллă Тон хусахӗ
Пулнă ҫул пекех.
Халăха ун сасӗ
Йăхăрнă текех:

«Халăх, тек ан тӗлӗр,
Вăран ыйхăран!
Ҫапăҫăр! Ей, килӗр!
Таптăр хӗн-хура!..»

«Ирӗк пултăр!—тенӗ
Халăх,—ҫӗр ҫинҫе!»
Харăс пуҫ ҫӗкленӗ
Раҫӗн хыҫăнҫен...

. . . . . . . . . . . .

Икӗ ӗмӗр иртрӗ
Атăл ҫӗрҫинҫе—
Халăх йурă илтрӗ
Ҫтаппансем ҫинҫен.

Икӗ ӗмӗр йухрӗ
Атăл тар-йунпа...
Йалăм пуҫа усрӗ
Пăнтăхнă тумпа...

Ҫапах туртса уҫрӗ
Пурнăҫ алăкне
Икӗ ӗмӗр хыҫҫăн
Ӗҫҫарӗ—хăйне.

Пайан Атăл тăрă,
Пĕлĕт пек таса.
Ав сулă ун тăрăх
Çĕн йурă тăсать:

«Ай та ей! ĕçлетпĕр,
Устĕр пысăк çурт...
Ой, ишшо та рас!
Тӳпенех çĕклентĕр
Хĕрĕх хутлă пӳрт...
Ой, ишшо та рас!..»

Васкасахçке сулă
Хумсене çуллать.
Ăна йешĕл йăлăм
Кăтрипе сулать...

Ой, Атăлăм, Атăл,
Йухах ес пĕрмай.
Санах ђыспа хапăл
Епĕ йуррăмра.

28 ç.

## Ҫёнелнё йал

Тăван йалта хаљ
Пурнăҫ урăх.
Йал-йыш—пёр вăй,
Хир—сакăр уй.
Йала кёрет
Хула куљттурё.
Муђи те ман:
Ҫук, тет, ҫветтуй...

Ђиркў ҫуртне
Пупран тасатнă.
Унта хаљ клуп та
Шкул,
Совет.
Унтах ав хаљ
«Хум-сасă» лартнă,
Мускав
Куллен йалпа пуплет.

Унтах ҫапаť
Пушар трушинён—
Мăн ђан—
Сехеђё тан та танн..
Сехетпеле ăнаť
Ёҫҫынён

Хисеплĕ ĕç—
Пуриншĕн тан.

Йалах хаљ кӳрнĕ
Ратлă вăрлăх:
Сысни,
Вăкăрĕ,
Сурăххи...
Тахçан
Ним уссăр выртнă шурлăх
**Ав курăр—**
Селĕм сат-пахђи.

Уйхир питнех
Хаљ плук çĕтет.
Килес çулта ак
Çĕтĕ трактăр.
Сĕнĕ çулпах
Йал çиçкĕнет.
Киввийĕ тек
Умран тасалтăр!

Çĕнелнĕ йал
Татах çĕнелтĕр,
Ей сирĕл çул çинђен,
Кулак!
Хĕрӳ ĕçре
Вăй-хал хĕмлентĕр
**Пĕрлех,**
Пĕрлех
Йалпа хулан.

28 ç.

## Кĕрле, республĕк!

Ӳсет,
ӳсет республĕк пирĕн;
пур ун
хурçă сатсем—
ик-виçĕ «Çĕмĕрле»...
Кĕрле, республĕкĕм!
ĕçпех туллаш та
пурăн,
ĕçпех
ырми
ыраншăн сехĕрлен.

Хурçă утсен колоннипе
ав карр!
çеçен хире тухаĭ
Канаш,
Вăрнар...
Ишеç вĕсем тĕпрен
аваллăха,
ишеç харамлăха,
асаплăха.

Кĕрлех, республĕк!
комунисăма йурттар,

йалпа хула, алла-алăн,
пĕрлех
Колхос
ес савăта
çимĕç турттар,
а, савăт,
ес ăна
шнейккă,
плук... леç.

Çĕкленĕ ал епир:
туптатпăрах,
туптатпăр
«пиллĕке»
тăваттăра!
Çампа,
пĕтĕм вăйпа
ĕçе кӳлĕн,
йăхăм,
пĕтĕм вăйпа,
штоп йун-ӳтрен
пĕрхĕнтĕр хĕм!

Кашни сехет,
кун-çĕр,
кашни ерне
пĕр ӳсĕмпех
пире
тăтăр йевитлĕ.
Шанатăп:
комунисăма кранитлĕ

ман йӑх
сотсиалисӑм кӗперне.

Пӗҫҫеншӗн мар,
йӑхшӑн
ыранлӑх ҫулӗ.—
Мӗлйун кӗсменӗн ҫеҫ
хавллӑ ишӗм,
вӗсем ҫеҫ
тинӗсе вӗҫлейӗҫ...
Пулӗ
пӗрлӗ вӑйпа кӑна вӑл
комунисӑм.

Кӗрлех, респуплӗк!
комунисӑма йуртар,
йалпа хула, алла-алӑн,
пӗрлех.
Колхос,
ес савӑта
ҫимӗҫ турттар,
а, савӑт,
ес ӑна
шнейккӑ,
плук... леҫ.
30 ҫ.

## Майакковскипе курнăçни

Траххомлă ламппă.
Сĕрĕмлĕ тĕтре.
Каска сĕтел.
Хут-кĕнеке купи.
Сĕнксе ларап пĕђђен
мулђа-пӳртре.
Тетраť çинђе çиçет
Перам ђуппи.

Йаштак пӳпе
хура çтена çинђен
куçпа курман паллана çын
хăпса
тухаť умма,
ытти портретсенђен
уйрăмăнах, —
йерой!—
пирус хыпса...

Авани, Майакковски!
(пирĕнтен,
хай, «тепĕр тĕнђене»
хăť есĕр кайнă,
çапах, —
права пиитăн!—

сирӗнпе
халап тытмасӑр
кӗҫӗр еп ҫӑтаймӑп).

Каҫарӑр!
сирӗн умӑра тӑма
ман
тухмаллаха тинӗспе,
мӑнтарнӑн...
Вӗт есӗр
хурҫӑ рифмӑ-риттӑмпа
парнас сӑртне
тӗпрен хирме пултарнӑ!

Лере* ӗҫҫарӗ
сирӗн сасӑрпа
туптаӑ хӗҫ-штык...
кунта вӑл—
пурнӑҫ,
трактӑр...
Выртаҫҫӗ пиршӗн
сирӗн умӑрта
ҫап-ҫутӑ
Маркӑс-Ленин хывнӑ
трактӑ.

Анҫах...
«йӑланӑн ҫыранне пырса
ҫапӑнҫӗ,
ванҫӗ йурату кимми...»

* Кӑпиталисӑм ҫӗршывӗсенҫе.

Тытма пĕлмерĕр
есĕр
паруса—
кавăҫтен тухрăр
кавăҫе килми...

Влатимĕр Майакковски!
ну, калăр, ма
мăшкăл маски
усайрăр пит ҫинҫен?
Хусамăрах
пĕлмерĕр тустарма
«пур ырлăх-телейе
кунҫулсенҫен».

«Инкек» сӳнеҫҫĕ вăл.
Ăна ҫĕнме
ансат кĕрешӳпе
йе ĕҫпеле.
Вĕт—мăшкăл, есĕр пек
йе Ҫеҫпĕлле,
хăвнах пăвмашкăн
йе хăвнах
пеме...

Тен, йăвăр мар
хăв кунҫулнах
татма...
Анҫах,
умри кунҫул тивлетлĕ ҫух,
пит намăс
пурнăҫпа аҫашланма,

аҫашлăхшăн
ĕҫре хаҫ вырăн ҫук.

Хăть вăл, пурнас кунҫул
никамăн та
тӳпе манерлĕ
вĕҫсĕр мар етемĕн.
Хĕрриййĕ пур
тискер тайканăн та.
Никам та
тинĕсе ҫырансăр темĕ...

Ҫапах,
ҫанталăк панă ĕмĕре
пиртен
ҫанталăк илтĕр хăй
пĕр ир...
Ҫак саккуна
кам ирсĕр ҫĕмĕрет,
ҫав пурнăҫри—
хăравҫă теҫерттир.

——

Сире
сăмах ман,—
итлĕр, ҫĕррисем.
сăвăсемпе,
кĕрешӳпе,
ĕҫпе
ҫанталăк панă ĕмĕре
илсе
пурнар хаҫ
пурнăҫри пур тивлетпе.

Куратпăр епĕр:
пирĕн халь умра
çап-çутă
Маркăс-Ленин хывнă
трактă.
Лере ĕççарĕ
пирĕн йурăран
шăраттăр штык...
кунта вăл—
пурнăç,
трактăр...

30 ç.

**Виççĕмĕш çул маршĕ**

«Пиллĕк»
Иккĕшĕ çумне
кӳлтĕ
виççĕ.
Тăр,
ман йăхăм,
пур ĕçре
тимлĕ,
витĕн!

Мул йăх-арĕн
пăс-вăйпа
сĕнкнĕ
пурнăç...
Йăхăм ман,
електрăпа
халь ес
курнăç!

Тулла Тнеппăр
хăвăртрах
пĕвелентĕр.
Куртăр

Ленин çуртине
кинемей те.

Ус
Украйнă
пахҫинҫе,
хурçă,
тимĕр...
Мĕскĕн Кокăҫ!
тупăкра
санăн
ĕмĕр.

Сталинкратăн
«ăйăрне»
кам хаҫ
ҫарĕ!
Ун çумне
Ростов
хăйне
йăлт кăкарĕ.

Йăлт кăкарĕ те—
çырлах,
пур асаплăх!
Урăх
ман йăх
ҫавсине
лармĕ
саплăк.

Ҫулхула
йемелккене*
им-йамлатăр.
ССРС
авто ҫине
хăвăрт лартăр.

Туркестан!
ҫĕр мамăкпе
ыткăн,
ҫиҫкĕн
Ҫĕпĕре
ес
«Туркҫиппе»
хăвăрт,
виҫкĕн!

Шурă мамăк
вырăнне
илĕн—
тулă...
Хурҫă ут,
васка!
тĕве,
ан та
ҫулăх!

Тăр,
ман йăхăм,
пур ĕҫре

* Йемелкке—урапа.

тимлĕ,
        виҫкĕн!
«Пиллĕк»
        иккĕшĕ ҫумне
кӳлҫĕ
        виççĕ.

Çеçкере
        йем-йешерет
пирĕн
        акă—
пилĕк конттинент
        çинҫе
            çурхи акăм...

Çавăнпах çав
        пур йенҫен—
куç
        ан хупăр!—
тăшманра
        çăвар
            карă̆
выçă тупă...

Вăхăт килĕ.
        Ыранах,
тен,
        мул йăхĕ
кӳпсе çитĕ...
        Пайанах
тăрăр сыхă!

Вăхăт çитĕ.
    Тĕнҫене
йун кӳллене...
Интернатсионалпа
    Усĕ—
        ЛЕНИН!..

Пур ĕçре те
    пирĕн
        тим
çиçтĕр
    виҫкĕн.
«Пиллĕк»
    иккĕшĕ çумне
    кӳлҫĕ
    виççĕ.
    30 ç.

* *
*

Тасал, пĕђђенлĕх—
Çепĕç лирă,
Тĕппех
Ђĕрем кĕрекинђен!
Аçтан
Санпа тăранĕ ыррăн
Ман харсăр йăх
Ку кунсенђе.

Çĕршыв кăкри çинђе
Ман йăхăм
Петтон,
Хурçă йешертнĕ ђух,
Ман—урă сăвăçăн—
Йутлăхĕ
Мĕн-ма ађаш ђеђекшĕн çук?!

Мĕн пехиллет петтон,
Ђул,
Хурçă
Ман йăхăма
Ку çĕршывра,—
Çавна мухтасшăн
Ку тăруçăн

Еп—урă сăвăç—
Йурăра.

Çампа, пĕҫҫенлĕх—
Çепĕç лирă,
Тасал
Ҫĕрем кĕрекинҫен!
Текех санпа тăранмĕ ыррăн
Ман харсăр йăх
Ку кунсенҫе.

29 ç.

## ТУПМАЛЛИ:

Стр.

Умсăмах вырăнне—**Васанкка Н.** статйи . . . . 3
Хапрăк йурри . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Çула тăрăх . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
Йантрамарĕ купăс усçăн . . . . . . . . . . 12
Çĕнĕ мăшăр . . . . . . . . . . . . . . . . 15
Улăх кĕвви . . . . . . . . . . . . . . . . 22
Улăхра . . . . . . . . . . . . . . . . . . 27
Уйăрлу çырăвĕ . . . . . . . . . . . . . . 31
*** (Тулли кĕмĕл уйăх) . . . . . . . . . . 34
Хир йурри . . . . . . . . . . . . . . . . 36
*** (Уттăн-уттăн кайăксем) . . . . . . . . 38
Шăллăм пионер çырăвĕ . . . . . . . . . . . 40
Атăл çинђе . . . . . . . . . . . . . . . . 42
Çĕнелнĕ йал . . . . . . . . . . . . . . . 46
Кĕрле, респуплĕк . . . . . . . . . . . . . 48
Майакковскипе курнăçни . . . . . . . . . . 51
Виççĕмĕш çул маршĕ . . . . . . . . . . . 56
*** (Тасал, пĕђђенлĕх) . . . . . . . . . . 61

# ҪĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
## КĂЛАРНĂ САВĂ КĔНЕКИСЕМ:

**Ваҫанкка Н.**—Хастарлăх.
**Ҫавăннах**—Октăпĕр ҫулĕ.

**Ҫеҫпĕл Мишши**—Сăвăсем.

**Елкер**—Самана.

**Уйăп М., Йанкас, Тукташ**—Сăвăсем.

**Шупуҫҫынни**—Ҫурхи кĕвĕсем.

**Мĕтри Ваҫлейĕ**—Пирĕн сас.

**Нестĕр Йанкас**—Ирхи йĕрсем.
**Ҫавăннах**—Вихтăрпа шăнкăрҫ.

Ҫитес вăхăтра Митта В., Уйăп М., Петтоки, Пиктемир т. ыт. сăвăҫсен кĕнекисем тухмалла.

**К Ĕ Н Е К Е С Е Н Е**

**кашни копператтив лавкинҫех илме пулаť.**

Хаке 45 пус.



Н. Янгас

# Ранние следы

Чувашгосиздат.
Чебоксары 1931